*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

54 (2466) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
утă, 16

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Таса та перекетлĕ

Атăлçи "Уй кунĕ" кăçал Оренбургра иртнĕ. Унта Чăваш Ен делегацийĕ те хутшăннă. Ăна республика пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынă.

Чăваш хресченĕсем çак мероприяти шайĕнче йĕркеленĕ тĕрлĕ куравра пулнă, канашлусене хутшăннă, кăсăклантаракан ыйтусене сӳтсе явнă. Паха опытпа паллашас тĕллевпе Саракташ районĕнчи "Красногорский" хуçалăха çитсе курнă. Кунта ял хуçалăх техники газ топливипе чупать. 1700 кубла метр газпа тивĕçтерекен куçса çӳрекен ятарлă автомобиль пур. Кирлĕ чухне унпа эрнере пĕр хут метан илме çула тухаççĕ. Колхоз ертӳçи асăннă тăрăх – техникăна газ çине куçарнă хыççăн çунтармалли-сĕрмелли материал тăкакĕ икĕ хут пĕчĕкленнĕ.

"Красногорский" колхоз хальхи вăхăтра Оренбург облаçĕнчи чи пысăк хуçалăхсен шутĕнче. Унта 6350 пуç мăйракаллă шултра выльăх, çав шутра 1500 пуçне аш хатĕрлеме самăртаççĕ. Ĕне йышĕ – 1926 пуç, ашлăх çитĕнтерекенни – 686. Кĕрхи тата çурхи культурăсем вун-вун пин гектар йышăнаççĕ. Кăçал, тĕслĕхрен, тыр-пул пусси 20250 гектарпа танлашнă.

Çунтармалли-сĕрмелли материал хакĕ çĕр-шывра çулсерен хакланать, çавăнпа техникăна газ топливипе ĕçлеттересси нумайăшне шухăшлаттарать. Заводсенчи инженерсемпе конструкторсем юлашки çулсенче перекетлĕ çĕнĕ технологисем тупассипе ытларах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Пирĕн республикăра "Уй кунĕ" кăçал Комсомольски районĕнче иртнĕччĕ. Куравра АГРОМАШ 85ТК-МЕТАН трактор кăтартнăччĕ. Вăл – шăпах çут çанталăк газĕпе чупаканскер. Унпа республика ертӳçи те паллашнă.

Экологи тĕлĕшĕнчен таса тата перекетлĕ топливăна анлăрах усă курас ыйтăва нумаях пулмасть республикăн экономика канашĕн ларăвĕнче те сӳтсе явнă.

# Ашпа сĕт ытларах

Кăçалхи кăрлач-çу уйăхĕсенче Чăваш Енри мĕн пур йышши хуçалăхра ял хуçалăх продукцийĕн калăпăшĕ 0,2 процент (Раççейре – 1,5 процент) ӳснĕ, 7,3 млрд тенкĕпе танлашнă. Ял хуçалăх организацийĕсенче çак калăпăшăн кăтартăвĕ 2,1 процент пысăкланнă. Федерацин Атăлçи округĕн 8 регионĕ аш-какай ытларах хатĕрленĕ, вĕсен йышне пирĕн республика та кĕнĕ. Сĕт сăвассипе те вăл чи лайăх 7 регион хушшинче.

Кăçал ял хуçалăх продукцине патшалăх программин килĕшĕвĕнче палăртнин шайĕнчех туса илмелле, хакланă тăрăх – унăн индексĕ 105,8 процентпа танлашмалла.

Çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне Чăваш Республикинчи агропромышленноç организацийĕсемпе ял хуçалăх таварĕ туса илекенсене 1 млрд тенкĕ субсиди (иртнĕ çулăн 96 проценчĕ, çулталăкри лимитăн 50,2 проценчĕ) куçарса панă. Планпа унăн кăтартăвĕ 2,1 млрд тенкĕ пулмалла. Федераци бюджетĕнчен 705,6 млн тенкĕ (пĕлтĕрхи çак тапхăрăн 103 проценчĕ, çулталăкри лимитăн 53,2 проценчĕ) куçнă.

Апла пулин те 2012-2014 çулсенче федераци бюджетĕнчен панă субсиди мĕн пур "шăтăк-çурăка" хуплаймĕ. 2012 çулшăн федераци 62,7 млн, 2013 çулшăн 160,4 млн тенкĕ парса çитереймен. Çулталăк вĕçлениччен федераци бюджетĕнчен 162, 5 млн тенкĕ илмелле.

Утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне агропромышленноçа кредитлассипе ĕçлекен комиссине 283 инвестици проекчĕ (1млрд тенкĕлĕх) тăратнă. Процент ставкисене субсидилессипе хальлĕхе пĕринпе те тивĕçтерӳллĕ йышăну туман.

ТĔЛ ПУЛУ

# Аса ил, юлташăм, Афгана



Сăн ӳкерчĕкĕ www.cap.ru сайтран илнĕ

Пĕтĕм Раççейри афганецсен тата çарта сусăрланнисен "Вăрçă инваличĕ" обществăлла организацин Чăваш Енри пĕрлĕхĕ Муркаш районĕнче черетлĕ культурăпа спорт мероприятийĕ иртерчĕ. "Ветерансемпе инвалидсем – сывă пурнăç йĕркишĕн" ят панă ăна.

Мăн Сĕнтĕр патĕнчи Каршлăх тăрăхĕ çав тери илемлĕ: йĕри-тавра вăрман кашлать, тарăн кӳлĕсем çуталса выртаççĕ, улăх-çаранра сĕткен курăк ешерет.

– Çак çăтмах кĕтесе ахальтен суйласа илмен эпир, – тет афганецсен республикăри ертӳçи Геннадий Матвеев.– Сывлăшĕ сиплĕ кунта. Кăкăр тулли сывлатăн. Атăл инçе мар. Ĕмĕрлĕхе сусăр юлнисем пур. Шанчăк памалла йĕкĕтсене. Вĕсем кашни районтан çитрĕç. Халăха тухни, çапăçури юлташĕсем чыслани кăштах та пулин савăнăç кӳретех. Чи малтанах Москакасси патĕнчи стелла умне чĕрĕ чечексем хутăмăр. Ачасем маттур пирĕн. Муркашри Константин Петров, Комсомольскинчи Илья Сизов, Канашри Юрий Гурьев тата ыттисем – ветерансен юхăмĕн хастар ертӳçисем. Паян пирĕн аманнисен, урапапа çӳрекеннисен чун-чĕре хавалне сӳнме парас марччĕ тесе тăрăшмалла. Санаторисене путевкăсем тупса паратпăр-ха, çапах çакнашкал пĕрле ларса калаçнине нимĕн те çитмест. Самантпа усă курса ман сусăррисен нушине çывăха илнĕ "Тус" компание (Н.Ф. Угаслов) тата " Дент-а-мед" фирмăна (Ю.А. Зорин) тав тăвас килет.

Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Владимир Никитин палăртнă тăрăх – районти 142 çамрăк Афганистанра пулнă, çиччĕшĕ киле таврăнайман. Çак çĕр çинче тăватă Совет Союзĕн Геройĕ, Мухтав орденĕн пĕр тулли кавалерĕ, икĕ Раççей Геройĕ, икĕ Социализмла Ĕç Геройĕ çуралса ӳснĕ. Вĕсен паттăрла ĕçĕсем çитĕнекен ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Пĕрне те теприне халăх умне чĕнсе калаçрĕç. Иван Васильев, Валерий Максимов, Владимир Пинарин, Родислав Иванов, Александр Паргеев, Петр Плотников, Виталий Семенов – хастар чăваш ачисем. Вăрçă мĕн иккенне кĕнеке тăрăх мар, хăйсем тӳссе ирттернипе пĕлеççĕ. Кашниех çамрăксене Тăван çĕр-шыва юратма, хӳтĕлеме ачаран хăнăхтарассине хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хурать. Хисеп хучĕпе чысларĕç вĕсене.

Чăваш наци конгресĕн "Сывă наци" комитетне ертсе пыракан Юрий Зорин çакна палăртрĕ:

– Эпир сирĕнпе мухтанатпăр. Çакнашкал тĕл пулу питĕ кирлĕ. Килтен тухса çӳрейменнисем сирĕнсĕр питĕ тунсăхлаççĕ. Чăваш наци конгресĕ ветерансен организацийĕпе тачă çыхăну тытать. Сывă пурнăç йĕркине анлăрах сарассишĕн сирĕнпе пĕрле ĕçлемелле пирĕн.

2-мĕш стр. ➔

## Пĕрле пулăшар!

Чăваш халăхĕ хуйхă-суйхă тӳсекене авалтанпах пулăшма тăрăшнă, инкекре алă панă. «Ырă туни ырăпа таврăнать», – тенĕ.

Паян кăнтăр-хĕвел тухăç Украинăран килнĕ çемьесем пирĕнтен пулăшу ыйтаççĕ. Вăрçă-харçăран сыхланас тĕллевпе пинпин çыннăн тăван тăрăхне, кил-çуртне пăрахса хăварма тивет. Украинăран килнĕ 40 ытла çемье (ачасемпе) федерацин миграци службин Чăваш Енри управленийĕнче пирĕн тăрăхра вăхăтлăх пурăнма ыйтса çырнă. Вĕсене тумтир, ытти хатĕр-хĕтĕр кирлĕ. Психологи, медицина тата финанс пулăшăвĕ те.

Республикăри хĕрарăмсен канашĕ Украина гражданĕсене пулăшмашкăн укса-тенкĕ пухма хутшăнать. Çавна май нухрата хăйĕн ыр кăмăллăх счечĕ çине куçарма ыйтать. Укса-тенкĕ куçармалли реквизитсем:

**Благотворительный фонд Чувашского республиканского совета женщин**

**428000, г.Чебоксары, пл.Республики, д.2, оф.119**

**ИНН 2130999669, КПП 213001001**

**р/с 40703810875000000039**

**в ОАО «Сбербанк России» Чувашское отделение №8613**

**к/с 30101810300000000609**

**БИК 049706609**

**Назначение платежа: «помощь беженцам Украины».**

Пухнă укса-тенкĕ çемьесене пулăшма каять. Республикăри хĕрарăмсен канашĕн чĕнĕвĕ çумне Чăваш Енри ашшĕсен канашĕ те хастар хутшăнать. «Ют хуйхă çук çĕр çинче» тени тĕрĕсех.

## Нумай ачаллă çемьесене

Хальхи вăхăта 2555 нумай ачаллă çемьене тӳлевсĕр çĕр вырăнĕпе тивĕçтернĕ.

Çак шутран 1650 çемье уйăрса панă çĕр вырăнĕнче пурăнмалли çурт-йĕр лартма кăмăл тунă. 366-шĕ хушма хуçалăха уйра анлăлатасшăн. 493-шĕ ăна ял хушшинчи çĕр çинчех тытса пырасшăн. 46 çемье дача йĕркелесшĕн.

Нумай ачаллă çемьесене мĕн пурĕ 283,5 гектар уйăрса панă.

Паянхи куна районсемпе хуласенче çĕр вырăнĕ илме 4745 çемье (республикăри нумай ачаллă çемьесен 48,7 проценчĕ) черетре тăрать. Вĕсене çĕр пама 3113 вырăн (355,2 гектар) уйăрнă та ĕнтĕ.

Улатăр, Шупашкар, Шăмăршă районĕсенче пур çемьене те çĕр вырăнĕпе тивĕçтернĕ. Канаш, Куславкка, Комсомольски, Етĕрне районĕсенче ку тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Канаш, Çĕмĕрле, Çĕнĕ Шупашкар хулисенче вара лару-тăру йывăртарах.

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 16.07 | 17.07 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | +21<br>+30 | +18<br>+28 |
| Çумăр çăвать | | – | ☂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 749 | 748 |

**Вăй патăр!**



*Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.*

# Лайăх ят мулран паха

Алла çава тытнă Валентина Семенова Мучар ял (Елчĕк районĕ) урамĕпе васкать. "Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче те канасшăн мар сутуçă", – пуçра тӳрех вĕçсе илчĕ шухăш. Тинтерех кăна лавккара паллашнăччĕ унпа. "Çулма мар, çавана туптама парасшăн", – терĕ пире сăмах хушнă май.

Çырма хĕрринче пурăнакан Сильвестр Николаевич Краснов патне çул тытнă-мĕн вăл. Вăл çеç-и? Кил хуçалăхĕнче сенĕк аври лартмалла-и, кĕреçе хăйрамалла-и е ытти ĕç тумалла-и – ăстаçăран пулăшу ыйтаççĕ. Тĕплĕ те паха тăвать вăл ĕçе. 81 çулти ватă килте пĕр самант та ахаль лармасть. Хăй калană тăрăх – çур çĕр иртни пĕр е икĕ сехетре выртать те тăваттăра вăранать. "Кун пек сахал çывăрнипе хăвăра кунĕпе йывăр туймастăр-и?" – ыйтмасăр чăтаймарăмăр эпир. "Куратăр вĕт, çӳретĕп", – ăшшăн хуравларĕ вăл.

Епле ăмсанмăн çакăн пек маттура? Ăна пăхатăн та шухăша каятăн: унăн çулне пурăнса çитсен мĕнле пулăпăр-ши?

Пĕчĕклех хăр тăлăха юлнă Сильвестр Николаевич. Малтанах Свердловск облаçĕнче пурăннă вĕсем. Вăрçă пуçланас умĕн ашшĕне чукун çул çинче вĕлереççĕ. Вĕри чунлăскер пуçлăхсене çăласшăн пулнă, инкеке сирсе янă, анчах хăйĕн ĕмĕрĕ вăхăтсăр татăлнă. Çакăн хыççăн амăшĕ ачисемпе тăван яла таврăннă. Юрать инçете тухса кайиччен ашшĕ килне сутман. Питех те йывăр çулсенче амăшĕ те пурнăçран уйрăлса каять. Ултă çулти арçын ачана кӳршĕри хĕрарăм пăхса çитĕнтерет.

Сильвестр Николаевичăн ывăлĕ вăл пурăннă вырăнта çĕнĕ çурт çĕклеме хатĕрленет, никĕсне янă та ĕнтĕ. Çуртпа юнашар гараж, теплица пуласса пĕлтерчĕ ватă. Теплицăра хĕлĕн-çăвĕн пахча çимĕçĕ çитĕнтересшĕн.

Хăйĕн кил хуçалăхĕпе те паллаштарчĕ. Çурт умĕнчи пахча карти алăпа ăсталанăскерех пулĕ терĕмĕр. Йăнăшман иккен. Тимĕр карта çинчи пĕчĕк çаврашкасене пенсионер хăй касса кăларса илемлетнĕ. Пахчара – 14 шăнкăрч йăви. Спорт вăййисен Олимпиади 2014 çулта иртнĕрен шăпах çавăн чухлĕ ăсталанă вĕсене ватă. Йăвасене иленнĕ кайăксем ирĕн те каçăн юррипе савăнтараççĕ.

Ара, ыр çынна епле савăнтармăн? Çырма хĕрринчи пушă выртакан çĕр çинче Сильвестр Николаевич кăçал 360 тĕп хыр лартнă. Ачисемшĕн пăшăрханнă пек пăшăрханать вĕсемшĕн. "Çум курăкне йăлтах çулмалла марччĕ. Шăрăхра пĕчĕкскерсене хӳтĕленĕ пулĕччĕç", – тет. Аяларахри çырмара вара унăн вăрманĕ ешерет. Кунта йăлт хăй лартнă йывăçсем. Самай çитĕннисем чăтлăх пулнă. Çамрăкраххисем те пур. Кунти хырсем те лайăх тымарланнă. Курăк хушшинче вĕсене уйăрса илме те хĕн. Пĕтĕмпе лартнă йывăçсен шутне палăртма йывăр. Тепĕр тесен, мĕне кирлĕ вăл? Чипер çитĕнччĕр кăна.

"Хамăн хыççăн лайăххи, ырри хăварас килет. Хам лартнă йывăçсем илемсĕр мар, хитрен юлччăр, хăрăк-харăк ан пултăр", – тет ветеран.

Чăн та, темĕн тума та ĕлкĕрет вăл. Пыл хурчĕсем тытать. Мастерскойри пӳлĕмсене кĕрсе курнă май унта вăл тăтăшах ĕçленине те ĕнентĕмĕр. Алла çава тытса курăк çулма тухать.

Темиçе çул каялла çак çын çурма вилĕ пулнă тесе кам калĕ? Аран çăлса хăварнă ăна тухтăрсем. Ун хыççăн вăл икĕ костыльпе тăватă уйăх çӳренĕ, ларма пултарайман. Вилĕме парăнтарса çĕнĕрен çын пулнă. Шăпах çавнашкал çынсем тытса тăраççĕ мар-и пурнăçа?..

**Ирина НИКИТИНА.**





## Пахча çимĕç йӳнелнĕ, çăмарта хакланнă

Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх – республикăра пахча çимĕç хакĕ йӳнелнĕ, çăкăрпа çăмарта хакланнă. Çакна çирĕплетме кăçалхи çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнчи тата утă уйăхĕн 7-мĕшĕнчи хаксене илсе кăтартнă. Сăмахран, купăста 5 тенке яхăн чакнă, кишĕр вара – 2 тенкĕ. Çавăн пекех сухан, пан улми хакĕсем те йӳнелнĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан пахча çимĕç хакĕ кăçал пĕчĕкрех. Çĕнĕ тухăç ĕлкĕрнĕ май вăл татах та йӳнелĕ.

Пĕр эрне хушшинче çавăн пекех çу, пĕрремĕш тата иккĕмĕш сортлă çăнăх, тулă çăкăрĕ чакнă. Ыраш çăкăрĕ вара ӳснĕ. Çăмарта та 4 тенке яхăн хăпарнă. Экспертсем çакна выльăх апачĕ хакланнипе çыхăнтараççĕ.

## Инкек куçа курăнмасть

Чăваш Енре иртнĕ çул 291 çын суранланнă. Çак кăтарту федерацин Атăлçи округĕнче чи пĕчĕкки иккен.

ЧР сывлăх сыхлав министрĕ Алла Самойлова пĕлтернĕ тăрăх – юлашки вунă çулта ĕç вырăнĕнче суранланнисен йышĕ 1,9 хут чакнă. Пĕлтĕр, висĕм çулхипе танлаштарсан, 52 çын сахалрах суранланнă, 18 çын вилнĕ (2012 çулта – 27). Çут тĕнчерен уйрăлнисен çурри ӳсĕр пулнă. Инкек ытларах ял хуçалăх, строительство тытăмĕсенче сиксе тухнă.

## Çамрăк вăрманçăсем ăмăртнă

Республикăри çамрăк вăрманçăсен слечĕ иртнĕ. Унта Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç, Куславкка, Муркаш, Вăрмар, Шăмăршă, Çĕмĕрле тата Етĕрне районĕсенчен 11 команда хутшăннă. Тĕрлĕ ăмăрту, мероприяти иртнĕ, слет кун-çулĕ çинчен стена хаçачĕ кăларнă. Программăра юрă-ташă та пулнă.

Ачасем çавăн пекех «ăслăлăх шкулĕсене» çӳренĕ: зоологи, ботаника, гидробиологи тата вăрман ĕçĕн вăрттăнлăхĕсене вĕреннĕ. Хăйсен ăсталăхĕсене конкурссенче кăтартнă. Пĕрремĕш вырăна «Çамрăк эколог» (Куславкка районĕнчи Тĕрлемесри вăтам шкул) команда тухнă.

Кăçалхи слета çĕнĕ ушкăнсем хутшăнни паха. Иртнĕ çул унта 7 команда çеç пулнă.

## Вăрăм ĕмĕрлисем

Патăрьел районĕнчи Кивĕ Катекре пурăнакан Анастасия Исаева 105 çул тултарнă. Вăл 1909 çулта çуралнă. Унăн шăллĕсемпе йăмăкĕ те нумай пурăннă – 98 çулчченех.

Анастасия Михайловна 15 çул каярах пачах курма пăрахнă. Халĕ вăл пĕрремĕш ушкăн инваличĕ.

Асăннă тăрăхра кăçал тăватă çын 100 çул тултарнă. Вĕсенчен пĕри – Тутар Сăкăтĕнчи Решида Азизова. Кинемей паян икĕ мăнукĕпе пурăнать, ывăлĕсем вилнĕ. Мăнукĕсем ăна сумлă юбилей ячĕпе кĕл чечеклĕ ылтăн çĕрĕ парнеленĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Аса ил, юлташăм, Афгана

← 1-мĕш стр.

Пуян мул пухса реххетленсе пурăнакансене хисеплеместĕп, укçан пĕр пайне инвалидсем валли уйăрма йывăр-ши? Мĕн çитмест паян? Çамрăксене пĕтĕçтерекен идеологи çук. Ав Украинăра мĕн пулса иртет. Фашизм пуçа çĕклеме пуçларĕ. Тытăçу ырăпа вĕçленмĕ. Хамăр ачасене йĕркеллĕ, ăслă-тăнлă, сывă çын пулма вĕрентер. ЧНК Президенчĕ Николай Угаслов хушнипе Илья Сизова тата Юрий Гурьева Хисеп хучĕ пама кăмăллă.

Геннадий Матвеев Афган ветеранĕсене – Олег Егоровпа Александр Мальцева юбилей медалĕ çакса ячĕ. Емельян Чернов (агрегат заводĕнчи ветерансен пĕрлĕхĕн ертӳçи), Юрий Егоров (Хĕрлĕ Чутай), Юрий Майрушкин (Патăрьел), Евгений Назаров, Илья Сергеев Тав çырăвне тивĕçнĕ. Сусăррисен ăмăртăвĕнче палăрнă Наталья Сорокина тата Тамара Петрова спортра çĕнĕ тӳпеме хăпарас шухăшлă.

– Тăван çĕр-шывăн кăнтăр чиккисене сыхланă нумай çамрăка паллатăп эпĕ, – терĕ Муркаш район пульницин тĕп тухтăрĕ Владислав Данилов. – Вăрçăран тăхлан татăкĕпе таврăннисене хам тĕллĕн темиçе операци тунă. Тĕрĕсленме çӳреççĕ. Операцисене çирĕппĕн тӳссе ирттерчĕç афганецсем. Ашшĕ-амăшне çавăн пек патвар ывăл ӳстернĕшĕн тав тумалла. Сывă çӳрĕр, ачасемпе мăнуксене ӳстерĕр, ан чирлĕр.

ЧР сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕн çумĕ Галина Германова каланă тăрăх – çапăçура аманнисене е каярахпа чирленисене реабилитацилес ĕçре çакнашкал тĕл пулусем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Йывăр самантра пулăшнисем юлташĕсем пăрахманнине, патшалăх тытăмĕсем хӳтлĕх тивĕçĕсене пурнăçланине туйса илеççĕ.

Спорт уявне темиçе сыпăка уйăрнă. Малтанах "Атте, анне тата эпĕ – спорт çемйи" ăмăрту йĕркелерĕç. Унтан тăршшĕне сиксесипе тупăшрĕç, турник çинче вăй виçрĕç. Волейбол турнирĕ хĕрӳ иртрĕ.

Сăмах май, Чăваш Енри афганецсен пĕрлĕхĕ Раççейри чи лайăх вунă организаци шутне кĕнĕ.

Матвеевпа калаçнă чухне пĕр кӳренӳллĕ ӳпкев илтĕнчĕ. Çар инваличĕсен тĕл пулăвĕсене сывлăх министерствисĕр пуçне ытти ведомство хутшăнманпа пĕрех. Шутласан йыхрав килессе кĕтсе лармалла-и вĕсен? Пĕр-пĕр ыйтупа пысăк вырăнти пуçлăхсем патне кĕрсенех тӳре-шара чунсăрлăхĕ куçа тирĕнет, – терĕ Геннадий Петрович.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

**Вулавăш**

## Валерий МУРАВЬЕВ

# Петĕр, прокурор тата виç çĕр лимон

### Калав

*(Малалли.)*

Çапах та хăшне-пĕрне вăл "кирпĕч шутлассинчен" çăлса хăварнă. Айăплисенех. Паллах, хăйне кирлĕ çынсене. Ют хулара кирлĕ çынсемсĕр епле пурăнайăн? Пурăнан пурнăçра ашне те, çуне те, пуллине те, пылне те... тăраниччен çиес килет. Укçи те кирлĕ. Пурне те шалу укçипе туянас пулсан кута йĕм илсе тăхăнмалăх та юлмĕ. Качча каймасăрах çуратнă ывăлне çын манерлĕ тăрантармалла, тăхăнтартмалла вĕт. Çакна асра тытса Анфиса "Сăр Ен çути" колхоз председательне Семен Семеновича тĕрмерен çăлса хăварчĕ. Кунта ĕçлеме пуçласанах килĕшнĕччĕ вăл ăна. Сăнĕ те, пӳ-сийĕ те шăпах унăн кăмăлне каяканни. Пĕр сăмахпа, унăн "виçи".

Çакскер, çĕрле ӳсĕрле çăмăл автомашина рулĕ умне ларнăскер, пĕр çамрăка таптаса вĕлерет. Автоинспекторсем те, милици следователĕсем те инкекре Семен Семеновичах айăплине тĕпчесе палăртаççĕ. Ĕçе судра пăхса тухас вырăнне прокурор ăна прокуратура следовательне тавăрса парать. "Ĕç иккĕленӳллĕ, тепĕр хут тĕпчемелле. Вилекен каччă хăй айăплă пулас...", – тет вăл.

Анфиса Васильевна тăрăшни харама кайман – Семен Семенович ирĕкре савăнса пурăнать. Паллах, хăйне тĕрмерен çăлакана нихăçан та манмасть.

Прокурор председателĕн çывăх тусĕсемпе паллашать. Ара, район прокурорĕн районти ертӳçĕсене аван пĕлмелле вĕт. Тата вĕсем пурте тенĕ пекех ăна кирлĕ çынсем. Чим-ха. Вĕсем пурте саккуна хирĕçле ĕçсем тăваççĕ иккен. Вĕсемшĕн пуриншĕн те тĕрме тахçанах "макăрать". Вĕсене пурне те прокурор хӳтлĕхĕ кирлĕ: райĕçтăвком председательне те, райпо председательне те, пулă инспекцийĕн пуçлăхне те, сăра завочĕн директорне те... Хитре хĕрарăм çак "çемьене" хăвăртах алла илет. Эрешмен шăнасене хăйĕн каррипе карса лартнăн. Эрешмен карри çирĕп, хăтăлса тух-ха унтан.

Пулă инспекторĕ сунар пăшалĕнчен çынна персе вĕлернĕ. Прокурор шучĕпе, паллах, ăнсăртран. Вилекен çын хăй айăплă. Çăмăл автомашина айне пулса вилнĕ каччă пекех. Райĕçтăвком тата райпо председателĕсем çынна вĕлермен, банк çаратман... Çапах та... Пĕрремĕшĕ хваттерсене хăй пĕлнĕ пек валеçсе взятка илсе пуять. Теприне сутуçăсем пуйтараççĕ... Халăха çаратса.

Анфисăн туссем татах пур. Анчах та вĕсен йышĕнче вулакан шалти ĕçсен районти уйрăмĕпе патшалăх автоинспекци уйрăмĕн начальникне тата район хаçачĕн тĕп редакторне тупаймĕ. Хытă хупăллă мăйăр пулчĕç пулас, прокурор вĕсене катса шĕкĕлчеймерĕ.

***

– Ăçта каятпăр? – хашка-хашка ыйтрĕ Германтан хытă чупнипе хăрăк туратран такăнса ӳксе çамкине ыраттарнă Женя.

Германăн та сывлăшĕ ват çынăнни пек пӳлĕнчĕ. Ӳсĕре-ӳсĕре, сăмахсене сурса кăларнăн хуравларĕ:

– Ăçта пултăр – сăра ĕçме. Çăвар типсе ларчĕ. Ăш çунать.

Хурахсем вăрмантан инçе кайнăччĕ ĕнтĕ, çӳçе тĕммисем хушшипе утатчĕç. Хула çийĕн вертолет вĕçни хайхисене шартах сиктерчĕ.

– Все. Захомутали нас, – пĕр шухăшламасăр персе ячĕ Дима.

– Это ГЭСстроевский наверно, – лăплантарчĕ Герман. – Откуда у нас полицейский вертолет?

Чупса хăшкăлнă пулсан та хурахсем уттине хăвăртлатрĕç. Халĕ вĕсен пĕртен-пĕр çăлăнăç – сăра барĕ.

Вертолет пуç çинчех кĕрлет ĕнтĕ. Пĕр çаврăм туса илчĕ те тăри пек сывлăшра çакăнса тăчĕ.

– Вы окружены. Ложитесь! – кăшкăрчĕç мегафонран.

Хăва хуллинчен такăнса малтан Дима ӳкрĕ, ун çине Женя пырса тăрăнчĕ. Герман та чарăнчĕ. Сăра барĕ енче, сăртра, милици машинисем курăнчĕç. Малалла чупсан капкăна лекессине пĕлсе Герман команда пачĕ:

– Назад!

Хыçалта та çул хупă иккен. Вертолетран трап тăрăх милиционерсем йытăпа анчĕç.

– Как быстро пронюхали сволочи! – чĕркуçленсе ларса ятлаçрĕ хурах.

Кĕçех ура айĕнче хăва çатри çатăртатни, йытă вĕрни çывăхрах илтĕнчĕ.

***

Лилия Петĕре кĕтсе ывăнчĕ. "Виçĕ сехетчен таврăнма пулчĕ. Çук та çук", – канăçсăрланчĕ вăл.

Кунсем кĕскелсе пыраççĕ. Акă паян та кун каç еннелле сулăнать. "Юлашки автобуспа яла кайма шут тытнăччĕ, пулмасть ĕнтĕ. Пĕр-пĕр юлташне тĕл пулчĕ-ши?"

Пилĕк сехет иртсен алăк хуралçи – шăнкăрав – тĕнкĕлтетсе илчĕ.

"Петĕрĕн çăра уççи пурччĕ-çке. Ку тата кам-ши?" Лилия алăк уçма васкарĕ. "Сăр Ен" райхаçатăн тĕп редакторĕ иккен.

– Килĕр, мала иртĕр, Никонор Захарыч.

Лилия Петĕрĕн аслă ĕçтешĕ çине пĕрре пăхсах ырă мара сисрĕ. Тĕп редактор ахальлĕн вĕсем патне мĕн тума килтĕр? Ĕçсĕр çапкаланчăк-и вăл? Канмалли кун та канлĕх çук ав. Ĕшеннĕ, хурлăх çапнă сăнлă.

– Петĕр килте çук-и?

– Вăрмана уçăлса çӳреме кайрĕ те темшĕн халĕ те çитеймерĕ.

– Килеймест вăл паян, – кăвак куçне аяккалла тартса малалла суймарĕ Никонор Захарович. – Вăл больницăра.

– Мĕн пулнă? – хыпăнса ӳкрĕ çамрăк арăм.

– Хĕненĕ ăна.

– Хытах-и?

– Тăна кĕмен-ха.

Лилия ĕсĕклеме тытăнчĕ. Хĕрарăм-çке вăл – йăваш чун.

– Çирĕплен. Халĕ сан çирĕплĕх Петĕршĕн эмелрен хаклă. Пуçтарăн. Больницăна каятпăр.

– Ачана ăçта чикес? – нимĕн тума пĕлмесĕр хытса тăчĕ Лилия.

– Пирĕн пата леçĕпĕр. Арăм килте. Ача пăхма манса кайман пуль-ха.

***

Анфисăна каллех телефон шăнкăравĕ вăратрĕ. Диван çинче канлĕн çывăрса кайнăскер юлхавлăн тăрса амăшĕ çуратнă "тумпах" мăкăртатса утрĕ.

– Алло. Миловидова слушает. Арестовали? Так быстро? Молодцы. Журналист живой? Жив? Хорошо.

"Эх, Германа шанса йăнăш турăм. Ненадежный человек. А если расколется? Германĕ, может, промолчит. Лешсене, çамрăккисене, шанмаллиех çук. Ну, ладно. Что будет, то будет. Надо успокоиться. Все будет о,кей". Анфиса буфетран коньяк илсе черккене хĕррипе танах тултарчĕ.

– Господи, помоги!..

"Конечно поможет, – лăплантарчĕ хăйне Анфиса. – Йĕркеллех пулать. Запасной вариант пур вĕт..."

...Çĕрле ăна КПЗра хурахсем виççĕшĕ те вилсе выртнине пĕлтерчĕç.

***

Çав каçах, çур çĕр иртсен, "Сăр Ен çути" колхозăн сысна ферминче вăйлă пушар тухнă. Пĕр вите тĕппипех çунса кайнă. Мисе пуç сысна çунса кĕлленнине пĕлмеççĕ-ха.

***

Çур çĕр иртсен Чул хулана çитиччен "Сăр Ен çути" колхоз председателĕ Семен Семенович Телятов хăйĕн "Волгипе" аварие çакланнă, йывăр аманнă.

***

Çав каçах, çĕрле, Шупашкартан – республика тĕп хулинчен черетлĕ рейда килнĕ автоинспекторсем руль умĕнче ӳсĕрле автомашинăпа ĕрĕхтерсе пыракан Зосим Зосимовича ярса илнĕ. Вăл – райĕçтăвком председателĕн пĕрремĕш çумĕ. Унпа юнашар "Сăр шурăмпуçĕ" ресторан директорĕ Екатерина Афанасьева ларса пынă. Зосим Зосимович инспекторсене хирĕç тăнă.

***

"Сăр хутлăхĕнче кăсăкли татах мĕн пулса иртнĕ-ши?" – ыйтĕ вулакан.

"Кунпа çитмест-им вара?"

"Пĕр каçшăн çителĕклех-ха та... Пирĕн ялта та хурахсем хуçаланнă. Укахви карчăкăнне кил хушшинчен тăватă хур "пĕçертсе" кайнă. Çтаппан Хĕветĕрĕнне йытă пур çинчех картаран така çавăтса тухнă...

...Мĕнле-ха капла? Хурахсен пусмăрĕнче пурăнмалла-и?.."

***

Александр Сергеевич хăнăхнă йăлапа ĕçе яланхи пекех ир çитрĕ. Советсен çурчĕ пушах. Паян – вырсарни кун, çавăнпа та ĕçтешĕсенчен пĕри те çук. Кунтан коммунистсене "хăваласа янă" хыççăн йĕрке пулать пуль тенĕччĕ те, улшăнусем курăнсах каймарĕç. Пуçлăхсем ӳрĕк-сӳрĕк, улшăну çукрах. Тепĕр тесен, Советсен çуртĕнче çĕнĕ çын çукпа пĕрех. Совет тапхăрĕнче пуçлăхра кам хуçаланнă, çавсемех шăлаварне сӳхетсе лараççĕ.

"Вырсарни кун тесе сакăр сехетчен çывăрмалла мар ĕнтĕ. Пĕри те килсе çитеймест. Чĕммен пулсан татах хăть. Пурте дачăна тапса сикрĕç-ши?" Райĕçтăвком председателĕ хăйĕн пысăк ĕç пӳлĕмĕнче каллĕ-маллĕ уткаларĕ. Ăна çĕрлехи инкек-синкек канăç памарĕ. Журналиста вĕлерме тăнă хурахсем виççĕшĕ те пĕр харăсах леш тĕнчене ăсанни тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. "Тĕрĕссипе, кунтан нимĕн тĕлĕнмелли те çук-ха. Телекурав, ав, кунсеренех питĕ хăрушла преступленисем çинчен каласа парать. Сăр тăрăхне те асар-писер самана кĕрлесе çитрĕ иккен. Çапах та хăйсем тĕллĕнех вилмен-ха КПЗри хурахсем, такам преступлени йĕрне пытарма хăтланнă ĕнтĕ. Дежурствăра камсем пулнă-ши? Республикипех шавлаççĕ ĕнтĕ. Ĕç шала кĕрсе кайиччен отставкăна тухмалла пуль. Хăваласа яриччен хам ирĕкпе тухса кайни аванрах-ши? Тепĕр тесен, хăраса тухса тарнă тейĕç, айăплама сăлтав шырĕç. Пуçлăхран тухсан пĕтĕм çитменлĕхе ман çине тиеме пултараççĕ. Влаçа алăран вĕçертсен çынсем хăвăрт пăлхайми пулаççĕ. Çирĕплленмелле. Пуринчен те çирĕпрех ыйтмалла. Алхасма памалла мар. Манăн çемçелĕхе туйса хăшĕ-пĕри алхасма тытăнчĕ. Çынна кăшт ирĕк пар кăна. Демократи çемçелĕхе пĕлтермест. Кĕтӳç çывăрса кайсан кĕтӳ саланать. Çавнашкалах. "Гайкăсене" пуринне те хытарса тухмалла".

Шухăш çинех пӳлĕме милици начальникĕсем çитрĕç.

"Кусене ятламаллиех çук-ха. Йĕркеллĕ ачасем. Çапах асăрхаттарса илни пăсмĕ. Пĕр каçра мĕн чухлĕ преступлени тăваççĕ те, ăçтан йĕркелĕх пур тейĕн".

– Пурте пухăнса çитессе кĕтмелли çук. Районта мĕн пулса иртнине йĕркипе каласа парăр. Мĕнле мерăсем йышăнатăр? Районта преступниксем алхасаççĕ, халăх тарăхăвĕ тулса çитнĕ. Эпир çывăратпăр-и?

– Пур сотрудник та ура çинче. Кашни преступление тĕплĕн тĕпчетпĕр, – çывăрманнипе ывăннă хĕсĕк куçне шăлса илчĕ Федор Алексеевич, районти шалти ĕçсен пайĕн начальникĕ.

*(Малалли пулать).*

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, утă уйăхĕн 21-мĕшĕ**

18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)

**Ытлари кун, утă уйăхĕн 22-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «МОДНАЯ СВАДЬБА» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)

**Юн кун, утă уйăхĕн 23-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ЯКОВ УХСАЙ». ВИДЕООЧЕРК О НАРОДНОСТИ В ПОЭЗИИ (12+)
20.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)

**Кĕçнерни кун, утă уйăхĕн 24-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.45 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Эрне кун, утă уйăхĕн 25-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)
21.00 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)

**Шăмат кун, утă уйăхĕн 26-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ЛЕТОПИСЬ СТОЛИЦЫ» (12+)
9.30 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
10.00 «ПРИКАЗ: ПЕМЕ ЮРАМАСТЬ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
17.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
18.00 «ТУЙ ИКЕРЧИ». ВОДЕВИЛЬ (12+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)

**Вырсарни кун, утă уйăхĕн 27-мĕшĕ**

9.00 «МУСКАВ КУÇÇУЛЕ ĔНЕНМЕСТ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (16+)
17.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)
17.30 «МОДНАЯ СВАДЬБА» (12+)
18.00 «ХЫРĂМ ТЫТСА КУЛАР-ХА!» В. ПЕТРОВ ШОУ-КОНЦЕРТ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Утă, 16 – юн кун | Утă, 17 – кĕçнерни кун | Утă, 18 – эрне кун | Утă, 19 – шăмат кун | Утă, 20 – вырсарни кун | Утă, 21 – тунти кун | Утă, 22 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 4.26 | 4.27 | 4.29 | 4.31 | 4.32 | 4.34 | 4.35 |
| | анать | 21.27 | 21.25 | 21.24 | 21.22 | 21.21 | 21.19 | 21.18 |
| Кун тăршшĕ | | 17.01 | 16.58 | 16.55 | 16.51 | 16.49 | 16.45 | 16.43 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун |
| | | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче |

АСЛĂ ÇĔНТЕРŸ: 70 ÇУЛ

# Павел Митрофанов: «Пурăнатпăр-ха, тăван, пурăнатпăр...»

Пурăнан пурнăç пуртă аври тăршшĕ мар çав. Ыран тăхăр вунă çул тултаратăп. Тавах турра! Атте-аннене пысăк тав. Пурнăç ялан, Петĕр Хусанкай калашле, хăйне евĕр, таттисыпписĕр. Пĕри хунав, тепри туйра, виççĕмĕшĕ кĕреш юман. Çитĕнет çеç-ха пĕри, тепри вăй питти ĕнтĕ, виççĕмĕшĕ çулланнă, ватăлать. Çапла пурăнтăм, ватăлтăм: курмаллине куртăм, илтменнине илтрĕм, пĕлменнине пĕлтĕм.

Мана çутă тĕнче кăтартнă ял – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Кушмара. Хресчен çемйинче виçĕ ывăл тĕрĕс-тĕкĕл, сывă ÿсрĕмĕр. Пиччесем – Михалпа Микула. Тăван тавралăх – ытарайми. Пуçа çĕклесе йĕри-тавра пăхатăн та – симĕс курпунлă виçĕ сăрт, çырма-çатра, хутăш вăрман курăнаççĕ. Ял çыннисем хитре, кăмăллă. Уй-хирте ĕçлеççĕ, карçинкка çыхаççĕ, çĕвĕ çĕлеççĕ. Атте-анне мана хутла вĕрентес терĕ. Аксарин шкулĕнче тăватă класс, унтан Ĕпхӳ Ĕсмел (Октябрьски) шкулĕнче виçĕ класс пĕтертĕм. Малалла вĕренме укçа-тенкĕпе йÿнеçтереймерĕмĕр.1941 çулхи çĕртме уйăхĕнче Чăваш Енрен Амур çинчи Комсомольск хулине ФЗО шкулĕнче платник-столяра вĕрентме илсе кайрĕç.

Шел, вĕренме, ăс илме май килмерĕ – вăрçă пуçланчĕ. Эпир мĕн пĕчĕкрен Буденный, Ворошилов, Чапаев ячĕсемпе хавхаланса та мухтанса ÿснĕ ача-пăча икĕ эрнерен мар тăк, уйăхран çĕнтерÿçĕ-Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмана, фашиста, нимĕçе таптаса лапчăтасса кĕтетпĕр. Кĕтетпĕр...

Нимĕç фашисчĕсемпе юлашки патрон юлмиччен Киевпа Смоленск çывăхĕнче, Балти тинĕсĕ хĕррине çапăçасса, нимĕç гренадерĕ Сталинград патĕнче Атăл шывне каскăпа ăсса илессе шухăшламан та пултараймăн. Вăрçă пуçлансан, тăватă уйăхран юпа уйăхĕн 28-мĕшĕнче хам ирĕкпе фронта туха кайрăм.

Тăватă çул пехотăра çапăçрăм. Канăç мĕнне пĕлмен. Малтанхи çапăçăва Сталинград патĕнче кĕтĕм. Хула çунать. Кунĕн-çĕрĕн хăлхана çуракан шăв-шав, самолетсен кĕрлевĕ, куçа çиекен тĕтĕм шăрши. Эпĕ çÿллĕ каччă пулнă, окоп та мана кăкăр таран çеçчĕ. Çавăнпа асăрханулăх та çаврăнăçулăх питĕ кирлĕччĕ.

Вăрçăра салтакшăн кашни минут – пурнăç. Пурнăç хаклă. Манăн çыру çырма та вăхăт пулман. Уйăхра пĕрре атте-аннене хам сывă пулни, киле çĕнтерÿпе таврăнасси çинчен пĕлтереттĕм. Çавă кăна. Çырусем илеттĕм. Ку – пысăк савăнăçчĕ. Çемленккере е салтаксен кĕске канăвĕ вăхăтĕнче хут купăс сассине илтнине те ас тумастăп.

Вăрçă – куççуль. Тăватă çул хушшинче миçе юлташа пытартăм-ши?

Виçĕ çула яхăн эпĕ пĕр аманмасăр çапăçрăм. Сержант ятне илтĕм. Иккĕмĕш Белоруссси фронтĕнче тапăнса çапăçнă. Каялла пĕр утăм та туман. Çапах та 1944 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче сулахай пĕçĕрен йывăр амантăм. Виçĕ уйăх госпитальте выртасси те питĕ асаплă иккен.

Çав çулхи чÿк уйăхĕн варринче иккĕмĕш Белорусси фрончĕн командующийĕ пулма Совет Союзĕн маршалне Константин Константинович Рокоссовские уйăрса лартрĕç. Ăна салтаксем питĕ юратчĕç, полководец тетчĕç.

Пĕрре такăнсан тепре такăнасса та кĕтсех тăр теççĕ ваттисем. Хĕрĕх пиллĕкмĕш çулхи Çĕнĕ çула йĕркеллĕ кĕтсе илеймерĕм, сулахай хулпуççине йывăр амантрăм. Кăна та чăтнă, тÿснĕ, кăшт самайлансан, госпитальтен тарса тухнă. Ăçта васкатăн «чăваш чĕппи» тенине те уяса тăман. Малалла, тăвалла!

Нимĕç фашисчĕсене Литвапа Латвирен хăвалараăмăр, Польша çĕр-шывне ирĕке кăлартăмăр. Юлашкинчен тăхлан çумăрĕ витĕр Берлина пырса кĕтĕмĕр. Çĕнтерÿ! Гитлер йăвине те çитсе куртăм. Рейхстаг стенине те таканлă атăпа пырса тапрăм.

Икĕ хут аманнă, пĕр хутчен контузи илнĕ инвалида, виççĕмĕш степень Мухтав орденĕн, «Паттăрлăхшăн» тата «Берлина илнĕшĕн» медальсен кавалерне киле ямарĕç. Тата икĕ çул Берлинта çар тивĕçĕсене пурнăçларăм.

1947 çулхи юпа уйăхĕнче тăван Тури Кушмарана таврăннă. Пÿртсен кантăкĕсене пăхсанах чуна ыраттаракан хуйхă пусрĕ. Вăрçă мĕн пур ял çынни çине çĕклемĕне хурлăх тиесе хăварнă, чăтма çук хытă лутăрканă. Атте-анне мана ăшшăн кĕтсе илчĕ. Хăйсен юнĕ, хăйсен ачи-çке. Виçĕ ывăлĕ те киле таврăннă. Анчах Михалпа Микула питĕ хытă сусăрланса пĕтнĕ, кил хушшинче аран хускалкалатчĕç.

Эпĕ тăватă çул Октябрьски районĕн ĕçтăвкомĕнче финанс пайĕнче инспектора ĕçлерĕм. 1951 çулта татăклă утăм турăм, «Кугеевский» совхозра Чăнкасси уйрăмĕнче бригадир ĕçне кÿлĕнтĕм. Бригадăра виçĕ ял: Аялти Кушмара, Шупашкар Ĕсмĕл тата Тури Кушмара. Ĕçчен халăх, палланă çынсем. Вăрман касаççĕ, атă-пушмак çĕлеççĕ, çăматă йăвалаççĕ. Çĕр ĕçĕнче те хастар пулчĕç. Улмуççи пахчи ÿссе сарăлчĕ. Чăх-чĕп, сурăх, ĕне фермисем, лаша вити пурччĕ. Чăнкассинчи Тамара Даниловна Яковлева учительницăпа çемье çавăртăмăр. Пурнăç чип-чипер майлашăнса кайрĕ. Икĕ ача – Ленăпа Кольăна – пăхса çитĕнтертĕмĕр.

Вăтăр пĕр çул ĕçлерĕм уй-хир бригадирĕнче. Ĕçлекен çынсемпе пĕр чĕлхеллĕ, ялйышпа канашлă пурăннă. Кÿршĕсемпе урлăпирлĕ пулман, çылăха кĕмен. Ĕмĕрĕпех табак туртман, ĕçкĕпе те иртĕхмен. Паян кун та виçĕ мăнукпа, вĕсен тăватă ачипе савăнатăп.

Пурнăç улшăнчĕ, çынсем те паламалла мар пулса кайрĕç-çке. Хутран-ситрен тăван ялта пулатăп. Урамсенче ĕçкĕçсем курăнкалаççĕ. Ĕлĕк фермăсем пулнă çĕрте мăян ашкăрса ÿсет. Трактор-комбайн тавраш курăнмасть. Çывăхри ялсенче пĕр агроном та юлман теççĕ. Çапла юрать-и вара?! Сад пахчи юхăннă, уй-хирсем питĕ йăваш... Хуçа та çук, ĕçлекенсем те курăнмаççĕ. Хамăр масар çинче çĕнĕ вил тăприсем ялта пурăнакан çынсенчен те йышлăрах вĕт.

Юлашкинчен мĕн калас? Шупашкарта пĕр пÿлĕмлĕ хваттер пачĕç. Ÿсĕркелетĕп, пуç çаврăнать. Туяпа çÿрекелетĕп. Пăхакан пур. Пурăнатăп-ха, вилместĕп. Начар пурăнма вăхăт çук, лайăх пурăнма укçа çук. Ара, урама тухатăп та питĕ тĕлĕнетĕп. Лапаткипе машина чупать, кашни утăмра аптека, банк, лавкка...

**Герман ЖЕЛТУХИН çырса илнĕ.**

ПĔР ŸКЕРЧĔК ИСТОРИЙĔ

# Шăпа кашнийĕн расна



Çак сăн ÿкерчĕкри çынсем камсем-ши? СССР Писательсен союзĕн членĕ Виссарион Синичкинпа юнашар – икĕ хĕр. Пĕри – унăн йăмăкĕ, Мария (сулахайри), тепри – кÿршĕ ял хĕрĕ Галина Максимова (сылтăмри). Вĕсем иккĕшĕ те Мăн Ямашри çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă. Галя вара Етĕрне районĕнчи Советскинчи вăтам шкулта пĕлĕвне аталантарнă. Каярахпа иккĕшĕ те «Заря» колхозра ĕçленĕ: Мария – уй-хирте, Галя фермăра вăй хунă.

Виссарион Синичкин çартан таврăннă тĕле хĕрсем çирĕм çула çывхарнă. Тантăшсем Çĕмĕрлери хатĕрлев кантурне ĕçе вырнаçнă. Каярахпа Мария Шупашкара пурăнма куçнă. Кунтах сутуçăра, поварта ĕçленĕ, çемье çавăрнă.

Галя вара Çĕмĕрлере 50 çул пурăннă. Пурăна киле медицина сестрисем хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă, урăлтаркăчра вăй хунă. Николай Андреева качча тухнă. Шел, каярахпа çемье саланнă. Ывăлĕ Сергей Орел хулинче милици шкулне пĕтернĕ, çавăнтах ĕçлесе пурăннă.

2007 çулта Галина Ефимовна хулари хваттерне сутса ашшĕ-амăшĕн килне таврăннă. «Ялти пурнăç çăтмахри пек туйăнать», – тет 75 çулти хĕрарăм.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**
**Элĕк районĕ.**

ПУÇАРУ

# «Ял çамрăкĕсем» конкурс

Утă уйăхĕн çурринчен пуçласа авăнăн 30-мĕшĕччен Мускаври "Ĕç тăвакан органсене тата йĕркелĕсе сыхлакан тытăмсене информаципе право енчен пулăшакан центр" пуçарнипе Пĕтĕм Раççейри "Ял çамрăкĕсем" конкурс иртереççĕ.

Ун тĕллевĕ – ял хуçалăхĕнчи профессисен ят-сумне çĕклесси, ял тăрăхĕсене аталантарассипе пухнă ырă тĕслĕхе анлăрах сарасси, вырăнти влаç органĕсемпе бизнес халăхпа çыхăнса ĕçлес енĕпе пухнă опыта тишкересси.

Конкурса виçĕ пая уйăрнă: "Эпĕ суйласа илнĕ профессии", "Пирĕн район аталанăвĕ", "Тăван тавралăх илемĕ".

Тупăшăва аслă тата ятарлă вăтам пĕлÿ паракан учреждениесенче вĕренекенсем, ял хуçалăх предприятийĕсенче ĕçлекенсем, тăван кĕтес илемĕшĕн ырми-канми тăрăшакансем хутшăнасса шанаççĕ.

Материалсене электрон почтипе ямалла: ano@ano – info.ru, тел. 682-77-87.


РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŸСЕМ

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**464. Косилки, грабли, окучники,** пресс-подборщики, картофелекопалки. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

**472. Гравий, щебень, песок, гравмассу,** торф, перегной, чернозем, асфальтную крошку, опилки. Т.: 8-906-132-63-78, 484161, 8-919-652-69-02.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 2584
Тираж 3654

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.